# «АЙСБЕРГĂН» — ÇĔНĔ ПРЕЗИДЕНТ

**Раштав уйăхĕн 1-мĕшĕнче Калайкасси шкулĕнче «Айсберг» ача-пăча пĕрлешĕвĕн Президенчĕн инаугурацийĕ иртрĕ. Çак официаллă мероприяти хыççăн вăл хăйĕн тивĕçне пурнăçлама тытăнĕ.**



Инаугурацие ертсе пыма 9-мĕш тата 11 П класĕнче вĕренекенсене, Женя Евдокимовпа Ксения Григорьевăна, шанчĕç.

Инаугураци акт залне шкул тата «Айсберг» ялавĕсене йăтса кĕнипе пуçланчĕ. Ун хыççăн суйлав комиссийĕн председателĕ Ольга Кошкина сăмах илчĕ. Вăл пĕлтернĕ тăрăх, «Айсбергăн» президентне 11 С класĕнче вĕренекен Никита Владимирович Львов суйланнă. Президент пулнине çирĕплетекен хута, ăнăçу, тăнăçлăх сунса, директăрăн вĕрентӳ çумĕ Ильза Анатольевна Григорьева пачĕ.

Никита Владимирович пуçтарăннă халăха уншăн сасăланăшăн, хăйне шаннăшăн тав турĕ. Çавăнпа пĕрлех «Айсберг» ача-пăча пĕрлешĕвĕ çирĕп утăмсемпе аталанма пуçласси пирки тупа турĕ.

Асăннă мероприяти хаваслă концертпа вĕçленчĕ.

***Ӳкерчĕк çинче «Айсбергăн» çĕнĕ президенчĕ /инаугураци саманчĕ/***



*Блиц-ыйтăм*

— **Сирĕн тĕллевсем?**

— Шкулта спорт тата культура мероприятийĕсем ытларах пулмалла. 2 эрнере пĕрре дискотека ирттерме планлатăп.

— **Мĕн килĕштеретĕр?**

— Документлă фильмсем пăхма юрататăп.

— **Юлашки вуланă кĕнеке?**

— Борис Акунинăн «FM» кĕнеки.

Эпир инаугураци хыççăн Никитăпа тĕл пултăмăр. Президент должноçĕнче мĕнле ĕçсем пурнăçласси пирки ыйтусем патăмăр.

— **Эсир ăçта çуралнă?**

— Эпĕ, Саха-Якутири Мирный хулинче.

**Президентпа Люба ВИШНЕВА калаçнă, 10 П класс**



Хĕл кунĕсем çитсе те тăчĕç, сивве юратакан кайăксем те вĕçсе çитрĕç. Паян сивĕ мар-ха тесе калама юрамасть. Ыран çанталăк мĕнле пуласси никам та татса калаймасть. Паян тумла юхать те, ыран шартлама сивĕ пулма пултарать. Кайăксем вара выçăллатутăлла пурăнаççĕ. Вĕсем валли апатланма сырăшсем туса çакмалла. Унта тырă, кĕрпе, çăкăр тĕпренчĕкĕсем хурса памалла. Килте эпир сырăш хатĕрлерĕмĕр. Çак пархатарлă ĕçе кашни ача пурнăçласан мĕн чухле кайăка сивĕре вилĕмрен çăлса хăварма пулать. Ачасем, эсир манпа килĕшетĕр-и?



**Настя Иванова, Очăкасси шкулĕ, 8 кл.**

***Редакцинчен***

***Ачасем, эпир Настя шухăшĕпе килĕшетпĕр. Хăвăр ăсталанă сырăшсене фото ӳкерсе пирĕн редакцине ярса парăр-ха. Сирĕн сырăшра мĕнле кайăксем апатланаççĕ? Ун пирки те кĕскен çырăр. Чи маттуррисене парнесем кĕтеççĕ. Конкурс нарăсăн 10-мĕшĕччен тăсăлĕ.***

# ЭСИР ЫЙТАТĂР — ЭПИР ХУРАВЛАТПĂР

**Ача амăшĕсен кунне хатĕрлесе пирĕн шкулта çак паллă куна çирĕплетнĕ планпа ирттерчĕç.**

**Вĕренекенсемпе класс ертӳçисем ертсе пынипе аннесен портречĕсене ӳкерсе курав /выставка/ йĕркелерĕмĕр, хайлавсем çыртăмăр, тĕрлĕрен сувенир-парнесем ăсталарăмăр, концерт хатĕрлерĕмĕр. Шкулта ирттернĕ концерта хамăрăн аттепе-аннесене чĕнтĕмĕр. Концерт аван пулчĕ, аннесем пире мухтарĕç.**

**Анчах та хăш-пĕр шкул ачи концерт пăхнă вăхăтра шăп ларма пĕлменни килĕшмен аннесене. Пĕр ача хăйне тытма пĕлменни мĕн чухлĕ çын кăмăлне пăсать. Хаçат урлă клубра мĕнле тытмаллине ăнлантарса параймăр-ши? Тен, вăл ача статьяна вулĕ те хăйне палласа илĕ, урăх апла хăтланмĕ.**

***Настя ИВАНОВА, Очăкасси шкулĕ, 8кл.***

***Редакци:*** Паллах хăш-пĕр ачасем хăйсене тытма пĕлменни нумай çын кăмăлне пăсать. Эсир уява килтĕр пулсан чи малтан хăвăр çинчен кăна мар, юнашар ларакансем çинчен те шухăшлăр: сирĕн тыткаларăш ыттисене юрă-ташăпа киленме чăрмантармасть-и? Концерт е спектакль курма артистсем сцена çине тухиччен акт залне кĕрсе вырнаçмалла, кайран вара тăхтав пуличчен хăвăра лăпкă тытмалла, шавламалла мар. Курма килекенсем сире мар, сцена çинчи артистсене курма килнĕ! Вырăнтан кăшкăрни те, юрă е спектакль вĕçлениччен алă çупни те лайăх мар. Тата акт залне кĕнĕ чух хăвăрăн телефонсене сӳнтерме ан манăр.

**«Хыçалти парта» редакцийĕ! Сирĕн хаçата мĕнле çырăнса илме пулать-ши?**

***Настя ИВАНОВА, Очăкасси шкулĕ, 8кл.***

***Редакци:*** Пирĕн хаçата çырăнас тесен сирĕн хăвăр шкулти учительсемпе/ е чăваш чĕлхине вĕрентекенпе, е вожатăйпа, е директорпа/ калаçса татăлмалла. Эпир пĕр уйăхлăх /2 номер/ çырăну йĕркеленĕ, хакĕ 6 тенкĕ.

**Пирĕн шкулта Çĕнĕ çул ирттерме пукане театр артисчĕсене чĕнесшĕн. Вĕсем спектакль лартĕç тата Çĕнĕ Çул елки ирттерĕç, хакĕ 50 тенкĕ. Уяв пĕр юхăмшăн /потокшăн/ 2 сехет пулĕ. Çĕнĕ çула пултаруллă ачасем, шкулти çамрăк артистсен ирттермелле мар-и вара?**

***Калайкасси шкул ачисем***

***Редакци:***

Пурнăç пĕр вырăнта тăмасть, вăл кулленех улшăнса пырать. Эпир пасара тум-тир илме кайнă чух нихăçан та ку япалана хамăрах çĕлетпĕр тесе тăмастпăр, кино пăхма кайсассăн та кăна хамăр та тума пултаратпăр теместпĕр, укçа тӳлетпĕр те хамăра кирлĕ япала е канăва туянатпăр. Эпир тахçанах пахалăха хăнăхнă çынсем. Туйсем ирттернĕ чух та малтанхи пек пысăк ĕçкĕ туса кил хуçи тертленмест: укçа-тенкĕ енчен йывăр пулсан та хăйсен ĕçне пĕлекен çынсене тара тытса уяв хатĕрлеме шанать. Предприятисемпе тĕрлĕ учрежденисенче ĕçлекенсем те уявсем ирттернĕ чух уяв хатĕрлекенсене чĕнеççĕ. МĔНШĔН??? Мĕншĕн тесен пурин те уявра лайăх тата пĕр тан канас килет. Пĕрисем савăнаççĕ, юрлаççĕ, ташлаççĕ — теприсем пăлхана-пăлхана чи йывăр ĕçе тăваççĕ — уяв ирттереççĕ. Çĕнĕ çул елкине илес пулсан, пĕтĕм йывăрлăх шкул ачисем çине тийĕнет. Паллах, маттур ачасем кашни шкултах, кашни класрах пур. Вĕсем кашни мероприятинех хутшăнаççĕ, олимпиадăсене те вĕсемех çӳреççĕ, спорт ăмăртăвĕсенче те вĕсемех... Пултаруллă ачан пур çĕрте те ĕлкĕрес пулать. Ку вара питĕ йывăр. Чĕрĕкĕ вĕçленет, Çĕнĕ çулĕ çывхарать — пур те турткалаççĕ маттур ачасене. Анчах тем пек тăрăшсан та, кашни кун киле сĕм тĕттĕм пулсан кайсан та вĕсен темиçе çул ĕçлекен артистсем пек пулаймасть. Уяври ĕçлесе çитереймен çитменлĕхсене эпир вара пур те лайăх куратпăр. Тепĕр тесен, юлашки чĕрĕке лăпкăн вĕçлеме, нимĕнле ытлашши пăлхавсăр Çĕнĕ Çула кĕтсе илме пултаруллă ачасен юрамасть-и? Эсир мĕнле шухăшлатăр?



# МЕРДОКĂН ПĔРРЕМĔШ ТЕТТИ



**XVIII ĕмĕрте ученăйсем пăспа ĕçлекен агрегат шухăшласа кăларасшăн пулнă. Вĕсен хушшинче Джеймс Уатта асăнмалла.**

Тĕпчевсем ирттернĕ хыççăн вĕсем кунашкал машина туса кăларма пулманнине ăнланнă. Джейм Уатт вĕренекенĕ Уильям Мердок ниме пăхмасăр хăйĕн тĕпчевне малаллах ирттернĕ. Часах вăл поршеньлĕ пăс двигателлĕ машина туса кăларнă. Каçпа тата çĕрле урам тăрăх çынсемпе йытăсене хăратса çак пысăках мар машинăна тĕрĕсленĕ.

**Настя ГРИГОРЬЕВА, 11 П класс & Саша МАТВЕЕВ, 9 класс**

**Хисеплĕ редакци, тĕнчери фирмăсен ячĕсем ăçтан пулса кайнă?**

**Саша, Москакасси шкулĕ**

**Adobe** — çак компание Джон Ворнок никĕсленĕ. Вăл пурăннă çурт хыçĕнче Adobe Creec юханшыв юхнă. Компание çак юханшыв ятне панă.

**Adidas —** компание никĕслекенсенчен пĕри Ади Даслер пулнă.

**Canon** — буддистсен ыркăмăллăх туррин Kwanon ячĕпе панă. Турă çыннисем протестлеме пултарассине шута илсе Canon тенĕ.

**Casio** — компание никĕслекен çын ячĕ Касио Тадао пулнă.

**Corel** — компание никĕслекен Майкл Коупленд /Dr. Michael Cowpland/ ятне панă. Ăна COwpland REsearch Laboratory /Коуплендăн тĕпчев лабораторийĕ/ тесе ăнланмалла.

**Daewoo** — компание никĕсленĕ Ким Ву Чонг ятне именчĕклĕн корей чĕлхипе «Пĕчĕк тĕнче уçлăхĕ» тенĕ.

**Fuji** — Яппун çĕрĕнчи Фудзи тăвăн ячĕпе панă.

**Google** — компани ячĕ «Googol» сăмахран пулнă. Вăл пĕрре хыççăн 100 нуль пулнине пĕлтерет. Пĕр инвестор чек çине Google тесе çырнă пулнă. Çапла ят пама шутланă та Сергей Брин хăйĕн компание.

**Hitachi** — яппун чĕлхинче «шуçăм» тени.

**Hyundai** — корей чĕлхинче «хальхи» тени пулать.

**IBM** — International Business Machines.

**Mitsubishi** — ăна компание никĕсленĕ Ятаро Ивасаки 1870 çулта шутласа кăларнă. Яппун чĕлхинче «Виçĕ бриллиант» тени пулать.

**Motorola** — çак ята компание никĕслекенĕ Поль Гэлвин машинăсем валли радио кăларнă чух шухăшласа тупнă. Çавăн чухне аудиокомпонентсем кăларакан фирмăсен ячĕсем «ola» ятпа вĕçленнĕ.

**Nikon** — Nippon Kogaku /Яппун оптики/ сăмахсене пĕрлештернинчен пулнă.

**Nintendo** — 3 «Nin-ten-do» яппун иероглифĕ «тӳпесем йывăр ĕçе пехиллеççĕ» тени пулать.

**Sanyo** — китайла «Виçĕ океан» тени пулать.

# ГОРОСКОП *ШКУЛ ПРЕДМЕЧĔСЕМ*

**Сурăх /21.03 - 20.04/.** Арçын ачан импульсивлă талайне /характерне/ тата вăл ачалăхра «пăхăр салтаксемпе» выляма юратнине шута илсе ăна çар ĕçне суйласа илме сĕнме пулать. Хĕр ачасен вара мĕн тумалла-ха? Тен, медсестра пулма сĕнме пулать? Пулма та пултарать. Хĕр ачасем биологи предметне кăмăлласах вĕренеççĕ, суту-илӳ ĕçĕ лайăх ăнать.

**Вăкăр /21.04 - 20.05/.** Ачан сасси ашшĕ-амăшне тинке иллнех тесе иккĕленмесĕр калама пулать. Эппин, ăна малалла аталантармалла. Юрă урокĕсем вĕсене валлиех теме пулать. Тепĕр пултарулăх — япаласен пахалăхне сисĕм шайĕнче туйни. Банкпа финанс ĕçĕ те вĕсен теме пулать. Çавăнпа та математикăпа туслă пулмалла. Сывлăха сыхлама хĕрсене спорт ташшипе кăсăклантармалла.

**Йĕкĕрешсем /21.05 - 21.06/.** Ачасене информатика, математика кăсăклантарма пултарать. Вĕсенчен пултаруллă журналистсем тата çыравçăсем тухаççĕ. Пĕр аслă пĕлӳ çинче чарăнса тăмалла мар. Вĕсем тĕрлĕ специальнăçпа çыхăнсан питĕ аван. Йĕкĕрешсенчен лайăх лингвистсем пулаççĕ. Анчах та пурнăç тăрăшшĕпех вĕренме тивет.

**Рак /22.06 - 22.07/.** Ачана интереслентерекен предмет — истори, тăван чĕлхе, зоологи, психологи. Ăçта вĕренме кайма пулать-ха? Калăпăр, апат-çимĕçпе е вăрманпа çыхăннă отрасльсене.

**Арăслан /23.07 - 23.08/.** Хăйсене кăтартас туртăм çынсене театрпа, киноактер ӳнерĕпе, тележурналистикăпа пурнăça çыхăнтарма хистет. Мĕнле вĕренесси предмета юратнипе çыхăннă. Урăхла май çук — вĕренӳ уншăн кичем япала. Ача ӳкерме юратать. Вăл пултарулăхпа çыхăннă пур профессинче те ăста.

**Хĕр /24.08 - 23.09/.** Ăна черчени, анатоми, ĕç урокĕсем килĕшеççĕ. Вĕсене юратмасан та пулать, анчах та тăрăшса, пĕтĕм вăй-хала парса вĕренмелле. Çак ачасенчен пултаруллă медицина ĕçченĕсем пулаççĕ. Медицина — вĕсен Турă пани.

**Тараса /24.09 - 23.10/.** Çак паллăна ытларах обществăлла усăллă пĕлӳ каять, шутламалли вăйă — шахмат — аталанма пулăшать. Вăл тактикăпа стратегие туптать. Административлă управлени, канашçă, менеджер ĕçне суйласа илме пулать.

**Скорпион /24.10 - 22.11/.** Уголовлă шырав, оперативлă работник, физик-ядерщик — скорпион пур çĕрте те туллин хăйĕн пултарулăхне кăтартать, пурнăçра ăшă вырăн шырама тăрăшмасть.

**Тĕкĕрçĕ /23.11 - 21.12/.** Ют чĕлхене пĕлмесен, географипе тата литературăпа кăсăкланмасан хăвна туллин палăртаймастăр. Социологие, политологие, философие суйласа илĕр. Халăхсем хушшинчи хутшăну институтне вĕренме кĕме тăрăшăр.

**Козерог /22.12 - 20.01/.** Тĕпчеме юратни ачаранах палăрса тăрать. Вĕсенчен лайăх инженерсем, архитекторсем, проект тăвакансем пулĕç. Услам ĕçĕ те ăнса пырĕ.

**Шывтăкан /21.01 - 20.02/.** Вĕсене экспериментла физика, электроника, програмăласси килĕшет. Техникăпа та туслă. Шывтăкакансенчен пултаруллă изобретательсем пулаççĕ. Тен, эсир ĕмĕр ĕçлекен двигатель шухăшласа кăларатăр?

**Пулă /21.02 - 20.03/.** Чăнлăха шырама юрататъ, химие кăмăллать. Фантазипе шухăш вĕçевне аталантаракан пур професси те вĕсене каять.

**3 № купон**